ЖУРНАЛИСТСЕМ ВĔРЕНЧĔÇ

ТР ял хуçалăхĕпе апатçимĕç министерстви район хаçачĕсен журналисчĕсене шĕкĕр Хусана пуçтарчĕ. Çĕр ĕçĕпе сыхăннă ыйтусене массăллă хыпар хатĕрĕсенче еплерех çутатасси пирки министерствăсемпе тĕрлĕ ведомствăсен специалисчĕсем сăмах тытрĕç. Кĕске вăхăтлă курсра ăсталăха ӳстерекен хаçатçăсемпе тĕл пулма Марат Ахметов министр та вăхăт тупрĕ.

— Эпир ку çула çĕр ĕçĕнчи пысăк çитĕнӳсемпе вĕçлетпĕр. Виçĕмçул эпир чăннипе те пĕрчĕллисен улăпла тухăçне çитĕнтертĕмĕр, Республикипе 6,5 миллион тонна тĕштырă пухса илтĕмĕр. Пĕлтĕр кăтарту кăшт çеç каярах — 5,6 миллион тонна. Икĕ çулта çавăн пек пысăк тухăç илни ахальтен мар. Хресчен çĕр çине пысăк тимлĕх уйăрма тытăнни, çĕрпе агротехникăна пăхăнса ĕçлени аванах курăнать. Эпир тухăç тĕлĕшĕпе Раççей кăнтăрĕнчи облаçсемпе танлашрăмăр. Тутарстаншăн ку калама çук пысăк çитĕнӳ.

Çапах та агропромышленность комплексĕ лайăх ĕçлет теме чĕлхе çаврăнмасть, — тет министр. — Мĕнпур ял хуçалăх предприятийĕсен 30–40 процентĕ çеç пайталăхпа ĕçлет, тупăш илет, ĕç укçин парăмĕсемсĕр пурăнать. Веçех коллектив ертӳçисенчен килет. Рынок условийĕсенче тахçанах пурăнатпăр, çавах та ертӳçĕсем патшалăх пулăшăвне кĕтсе выртаççĕ.

— Хаçатра, телекăларăмсенче, радиора ĕçлекенсен çав 30–40 процент хуçалăхсен опытне ытти вырăнсенче анлăрах сармалла, рынок условийĕсенче хуçаланма вĕрентмелле. Çак ырă тĕслĕхе хаçатсем тăрăх сармалла. Номертен номере хăвăн кĕсйӳнте мĕн чухлĕ укçа пур, çавăнпа пурăнма, хуçаланма вĕрентмелле.

Акă, Балтаси районнех илер. Кунти хуçалăхсем çĕнĕлле пурăнма вĕреннĕ. Иртнĕ çула вĕсем кашни ĕнерен 5000 килограмм сĕт суса илнипе вĕçлерĕç. Епле пысăк парнепе кĕреççĕ кунти выльăх-чĕрлĕх пăхакансем! Тĕштырă та тăрăхра сулмаклă виçепе пухса илеççĕ.

Район хаçачĕсенче ĕçлекенсем умĕнче «Татагрохим», «Татмелиорация», «Татарстан сете», «Татмясопром» пуçлăхĕсем тухса каларĕç. Юлашкинчен журналистсене Çӳлту районĕнчи пĕр хуçалăха илсе кайса кăтартрĕç.

Журналистсем те пĕр чĕмсĕр тăмарĕç. Тĕрлĕ пуçлăхсен, специалистсен вĕсен кăткăс ыйтăвĕсене хуравлама тӳр килчĕ.

Çакăн пек вĕрентме журналистсене килес çул ака умĕн пухаççĕ.

Виталий ЕЛТОВ.
Автор сăнӳкерчĕкĕсенче: «Татар-информ» агентствин ертӳçи Римма Ратникова тата Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç министрĕ Марат Ахметов район журналисчĕсен ыйтăвĕсене хуравлаççĕ; журналистсем вĕренӳре.

ЭЛШЕЛ ĔÇЧЕНĔ

«Ĕçчене ĕç юратать», — теççĕ чăвашсем.

Ку сăмаха Михаил Гаврилов çинчен юри шутласа кăларнă тейĕн. Пăва районĕнчи Элшел ялĕнче ăна пурте «ĕçчен» тесе чĕнеççĕ.

Михаил Аслă Отечественнăй вăрçă пĕтнĕ çул çуралнă, ăçта кăна ĕçлемен-тĕр хăй пурнăçĕнче. Тимĕрçĕре, шкулти кочегаркăра, хирте комбайнпа та, тракторпа та, килĕнчи хуçалăхне те тытса тăрать.

Кăçал Теччĕ районĕнчи Кăнна Кушки ялĕнчи хуçалăха çĕклеме кайнă. Унти чăвашсене тырă пухма пулăшнă, пĕр кунра 23 бункер тĕштырă пуçтарса кĕртнĕ.

Халĕ хирте ĕç çук, анчах Михаил хĕлле те килте лармасть. Ялти ача садĕнче электрик тата кочегар пулса ĕçлет. Унăн арăмĕ — Лида, Раккасси хĕрĕ, пиллĕкмĕш ачине çуратнă чух сарăмсăр вилсе каять. Ашшĕ пилĕк хĕре пĕччен ӳстерет. Пурне те вĕрентсе кăларать, ĕçе вырнаçтарать. Аслă хĕрĕ, Галя, кӳршĕ яла, Ескӳльне качча тухнă; халĕ Элшелĕнчи ача садĕнче заведующи пулса ĕçлет. Иккĕмĕш хĕрĕ, Лена, Чĕмпĕрте хăйĕн çемйипе пурăнать. Тепри, Наташа, ашшĕпе пĕрле пурăнать, ялти лавккара сутуçă ĕçне юратса кӳлĕннĕ. Тăваттăмĕш хĕрĕ, Олимпиада, Раккасси ялĕнче фермăра вăй хурать. Чи кĕçĕнни, Светлана, Чĕмпĕр облаçĕнчи Лаишевкăра пурăнать, халĕ пĕчĕк ачапа ларать.

— Манăн телей — ачасенче, — тет Михаил Григорьевич. — Хĕрсемпе кĕрӳсем килсе пулăшсах тăраççĕ. Çулла пĕтĕм çемье пĕрле пуçтарăнсан маншăн чи пысăк уяв пек туйăнать.

Светлана ЭЛШЕЛ.
Константин МАЛЫШЕВ сăнӳкерчĕкĕ.

ÇЫН ТАТА САККУН

ИРĔКЛĔХ ПРАВИСЕМШĔН

Нумай пулмасть пĕтĕм тĕнче Этем прависене сыхлассин кунне паллă турĕ. Тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенче çак ыйту яланах пысăк вырăн йышăннă. Этем прависене пăхăнса пурăнасси çинчен перестройка тапраннă хыççăн пирĕн çĕршывра та сахал мар калаçма пуçларĕç. Раççейĕн пур регионĕсенче те тенĕ пекех Этем прависен лиги, Пĕтĕм тĕнчери амнести, Хельсинкири Этем прависен ушкăнĕ тата ытти организацисем тымар ячĕç.Тутарстанра правасене сыхлакан пĕрремĕш организаци 1996 çултанпа ĕçлет. Ăна йĕркелесе яракансенчен пĕри — паллă журналист тата публицист Фарит Сабитович МАНАСЫПОВ пулнă. Халĕ вăл Пĕтĕм Раççейри правасене сыхлакан «Этем прависемшĕн» юхăмăн Тутарстанри уйрăмĕн ертӳçи. «Сувар» хаçат корреспонденчĕ нумай пулмасть унпа тĕл пулса калаçрĕ.

— ***Фарит Сабитович, каласа параймастăр-ши кăштах пирĕн вулакансене, мĕн вăл этем прави? Тата ытларах мĕнле ыйтусемпе ĕçлетĕр эсир халĕ?***

— Этем правин концепцийĕ икĕ ăнлавран тăрать. Пĕрремĕшĕ — вăл çуралсанах илекен пĕтĕмĕшле правасем (пурăнма, ĕçлеме, ирĕклĕ çын пулма тата ытти те). Иккĕмĕшĕ — юридици прависем (влаç органĕсене суйлама тата суйланма...). Халĕ эпĕ Мускави Хельсинки ушкăнĕн программипе килĕшӳллĕн Тутарстанри тӳрлетӳ учрежденийĕсенчи лару-тăрăва, этем прависене пурнăçласа пырас тĕлĕшпе вĕсенче мĕнлерех пулнине тĕпчес енĕпе ĕçлетĕп. Тĕрмере ларакан çын та çынах юлать-çке. Енчен те эпир хамăра цивилизациллĕ общество тесе шутлатпăр-тăк, пирĕн вĕсем çинчен те манмалла мар. Тĕнче тата Раççей законодательствисенче судпа айăпланнă çынсен прависене хӳтĕлекен нормăсем пур. Вĕсемпе килĕшӳллĕн тĕрмере ларакан кашни çын тӳрлетӳ учрежденийĕсенче этеме тивĕçлĕ условисене тивĕçмелле. Вĕсен пурин те каçару ыйтса çырма май пулмалла. Çакă хальхи обществăн этемлĕхне кăтартакан паллăсенчен пĕри пулать.

— ***Пирĕн тĕрмесенче лару-тăру мĕнлерех йывăр пулни каламасăрах паллă. Суд системи ăнăçлах ĕçлеменнипе «решетке леш енне» ним айăпсăр çынсем лекни час-часах тĕл пулать...***

— Юлашки вăхăтра Раççейре уголовнăй ĕç тăвакан системăна реформăлас, ăна Раççей Конституцийĕпе, Европăри пенитенциар системин йĕркисемпе тата тĕнчери этем прависемпе çыхăннă ытти актсемпе тивĕçтерес тапхăр пырать. Унпа килĕшӳллĕн патшалăх влаç органĕсемпе обществăлла организацисем тачăрах çыхăнса ĕçлеме пуçларĕç. РФ Президенчĕ çумĕнчи тата федераци субъекчĕсенчи каçару ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссисем пăхса тухакан ĕçсен шучĕ çулсеренех ӳссе пыни çакна питĕ лайăх çирĕплетсе парать.



Каçару ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссисем 2002 çулхи январь уйăхĕнчен Раççейĕн кашни субъектĕнчех, вăл шутра Тутарстанра та, ĕçлеме пуçларĕç.

Комисси хăйĕн тивĕçĕсене «Раççей Федерацийĕнчи каçару ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссисем çинчен» РФ Президенчĕн 2001 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн пурнăçласа пырать. Ку Указ унччен РФ Президенчĕ çумĕнче ĕçленĕ комисси ĕçне урăхла йĕркелесси, унăн хăш-пĕр тивĕçĕсене субъектсене парасси çинчен калать. Ăна Тутарстанра федераллă центрпа федераци субъекчĕсем пĕр-пĕрин полномочийĕсене пайласа уйăрасси çинчен калакан Договорсем тĕрĕс пулнине кăтартакан тĕслĕх вырăнне йышăнчĕç.

Сăмах май, пирĕн республикăра каçару ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комисси унччен те пулнă. Ăна 1994 çулхи апрелĕн 14-мĕшĕнче ТР Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн туса хунă. Ку право çинчен федераллă центрпа Тутарстан хушшинчи пĕр-пĕрин полномочийĕсене пайласа уйăрасси çинчен калакан Договорта та каланă. Комиссие 12 çын кĕнĕ. Çичĕ çул хушшинче вăл 7983 ĕç пăхса тухнă. Вăл шутра 708 судпа айăпланă çынна ирĕке кăларнă е наказани срокĕсене самай кĕскетнĕ.

Анчах та 2001 çулхи октябрь уйăхĕнче РФ Генеральнăй прокурорĕн çумĕ А.Звягинцев çак норма çинчен калакан ТР Конституцийĕн 111-мĕш статйинчи 16-мĕш пункчĕ çине протест пачĕ. Пĕрремĕш инстанцири суд унăн протестне тивĕçтерме йышăнчĕ. РФ Верховнăй сучĕ те унăн решенине улăштармасăрах хăварчĕ.

ТР Президенчĕ çумĕнчи каçару ыйтăвĕсемпе ĕçлекен РФ Президенчĕн указĕпе йĕркеленнĕ çĕнĕ комисси ĕçĕнче уйрăмлăхсем те пур. Малтанхи комисси каçарма ыйтакана ходатайствăсене республика тулашĕнчи тӳрлетӳ учрежденийĕсенче тытакан заключеннăйсенчен те пăхса тухма пултарнă. Халĕ вара вăл Тутарстанри тӳрлетӳ учрежденийĕсенчи заключеннăйсен ходатайствисене кăна йышăнать. Унсăр пуçне унăн, положенипе килĕшӳллĕн, Раççейри кăна мар, ют çĕршыв сучĕсем айăпланă çынсен ĕçĕсене пăхса тухма та ирĕк пур.

— ***Каçару комиссийĕн ĕç йĕрки мĕнлерех?***

— Комисси — обществăлла организаци. Çавăнпа та вăл ходатайствăсене наказанисене пурнăçлакан управленирен çителĕклĕ таран килсен кăна пуçтарăнать. Вĕсем вара Тутарстанра — 16, вăл шутра 11 тӳрлетӳ колонийĕ, 1 тĕрме тата 4 следстви изоляторĕ. Вĕсенче паянхи куна 17 пине яхăн çын ларать (нормăпа 14 пин вырăн кăна). Тӳрлетӳ учрежденийĕсем çавăн пек тулса ларни, паллах, этем прависене хирĕçлет. Çавăнпа колонисемпе тĕрмесенче тĕрлĕ ерекен чирсем, уйрăмах туберкулез, питĕ хăвăрт аталанаççĕ. СПИДпа чирлекенсене ыттисенчен уйрăм тытмалла, вĕсене сиплес ĕçсене те туса пымалла. Анчах та камерăсем çителĕксĕррипе ку ĕçсене пурнăçласа пыма çăмăл мар. Çавăнпа та çак тата ытти лайăхах мар факторсене те шута илме тăрăшать комисси ходатайствăсене пăхса тухнă чухне.

Кашни ходатайствăна вăл учрежденирен тухас умĕн ятарлă журналта регистрацилеççĕ. Унтан ăна наказание пурнăçлакан Управленине ăсатаççĕ. Çакăн хыççăн кăна вăл каçару ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комиссие çитет. Комиссин вара ходатайствăна çитнĕ хыççăн 15 кун хушшинче пăхса тухмалла та РФ Президенчĕ патне хăйĕн пĕтĕмлетĕвне ямалла. Тата çакна каламалла. Ходатайство РФ Президенчĕ патне лектĕр тесен, ăна заключеннăй хăй çырмалла (малтан вара унăн тăванĕсем е пĕлĕшĕсем çырни те çителĕклĕ пулнă).

Тата, паллах ĕнтĕ, каçару ыйтса çырнă е тӳрлетӳ учрежденийĕн администрацийĕ каçарма сĕннĕ кашни çынна комисси ирĕке кăларасси е заключени срокне чакарасси çинчен йышăнать тени тĕрĕс мар. Каçарма ыйтакан ходатайствăна пăхса тухнă май комисси айăпланнăн çын заключенинче хăйне мĕнлерех тытнине, айăплав срокне тултарнине, суд айăпласа лартнă тĕрĕслев срокĕнче вăл преступлени тунине е туманнине, унăн сывлăхĕ мĕнлерех пулнине, вăл миçе хутчен судпа айăпланнине, çемьери лару-тăруне тата ыттине те шута илме тăрăшать.

Çĕнĕ комисси 2002 çул пуçламăшĕнчен 10 лару иртторчĕ. Вĕсенче 427 ходатайство пăхса тухнă. Вăл шутран 44 ходатайство тăрăх каçарма е заключени срокне чакарма йышăну тунă.

Тутарстан гражданĕсем хăйсен прависене сыхлас ыйтусене çак адреспа çырса яма пултараççĕ: 420066, Хусан, а/я 29, тел. (8432) 43-91-57.

Игорь МАТВЕЕВ.
Николай СТЕПАНЦЕВ сăнӳкерчĕкĕсенче: Ф.Манасыпов; тĕрме сăнарĕсем.